Семинар хыҫҫӑнхи шухӑшсем

# Ӗҫлекентен вӗренмелли пурах ҫав

**Кашни ҫынранах мӗн те пулин вӗренмелли пурах. Ҫакна тӗпе хурса республикӑри ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем пӗр-пӗрин опычӗпе паллашассине тӗпе хураҫҫӗ. Нумаях пулмасть пирӗн районти ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем Вӑрнарта пулнӑччӗ. Иртнӗ эрне кун вара пирӗн патра 4 районӑн зонӑри семинарӗ иртрӗ. Чи малтанах Шупашкар районӗнчи ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнче, Етӗрнесем Ярославка ял тӑрӑхӗнче, Сӗнтӗрвӑррисем Муркаш ял тӑрӑхӗнче пулса курчӗҫ.**

**Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем выльӑх-чӗрлӗх масарӗнче пулса курчӗҫ. Унтан районти историпе краеведени музейӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашрӗҫ. Моделлӗ ача-пӑча библиотекинче, паттӑрсен аллейинче пулса курчӗҫ. Унтан район администрацийӗн ларусен залӗнче 4 районти ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен пӗрлехи канашлӑвӗ пулчӗ. Ӑна республикӑри муниципаллӑ йӗркелӳсен Канашӗн правленийӗн председателӗ В. И. Максимов ертсе пычӗ.**

Муркаш районӗнче пулса курнипе хӑнасем кӑмӑллӑ юлни кунти лару-тӑрупа паллашнӑ чухне тӳрех курӑнчӗ. Хӑйсен шухӑш-кӑмӑлне вӗсем семинарта пытармарӗҫ. Етӗрнесем акӑ Ярославка ял тӑрӑхне те, кунти предприятисемпе организацисене те пултаруллӑ ҫынсем ертсе пынине тӳрех асӑрханӑ.

– Ертӳҫӗсен кадрӗсемпе сирӗн йывӑрлӑх ҫукки куҫкӗретех, – терӗҫ вӗсем. Нискассинчи пӗтӗмӗшле практика врачӗн офисӗн опычӗпе ют ҫӗршывсенчен килсе паллашни те, кӑҫал Нискасси шкулӗ РФ Президенчӗн грантне ҫӗнсе илни те ҫакнах ҫирӗплетсе парать.

–Муркашра ниҫта ҫӳп-ҫап выртнине курмарӑмӑр, – ку вара Сӗнтӗрвӑррисен шухӑшӗ. – Пирӗн сирӗн шая ҫитиччен ҫанна тавӑрса ӗҫлемелле-ха. Сирӗнтен вӗренмелли ҫӑннипех те нумай.

Вӗсем Паттӑрсен аллейинче пулнӑ хыҫҫӑн тата ак мӗнле шухӑш ҫуралчӗ.

–Пирӗн сирӗнни чухлӗ вӑрҫӑ паттӑрӗсем ҫук, анчах та сирӗнтен тӗслӗх илсе хамӑр патра паллӑ ҫынсен аллейине уҫас кӑмӑл ҫуралчӗ.

Сӗнтӗрвӑррисемшӗн пирӗн районти ял тӑрӑхӗсем хӑйсен ӗҫ-хӗлне альбомсем урлӑ кӑтартса пама пӗлни те, хӑйсен пурнӑҫӗ ҫинчен буклетсенче каласа пани те тӗслӗх илмелли самант пулчӗ.

Шупашкарсемшӗн те Мӑн Сӗнтӗрте тӗлӗнмелли пулман мар.

–Сирӗн ял тӑрӑхӗсен депутачӗсем ял тӑрӑхӗн пурнӑҫне интереслӗ тӑвассишӗн тӑрӑшни савӑнтарать, – Мӑн Сӗнтӗрти ҫӑкӑр заводӗнчен тухнӑ чухне ҫирӗпленнӗ шухӑша пӗлтерчӗҫ вӗсем. Асӑннӑ предприятие ертсе пыракан Л. Г. Ильгечкин халӑх пултарулӑх ушкӑнне ҫӳренине пӗлнӗ иккен вӗсем.

Хӑнасем пирӗн районти ял тӑрӑхӗсен ӗҫне-хӗлне сӑнланӑ май хӑйсен проблемисене те пытармарӗҫ. Пӗрле тӗл пулса калаҫнин результачӗ шӑпах курнӑ ҫӗнӗлӗхсене хӑйсем патӗнче пурнӑҫа кӗртессинче пулмалла-ҫке.

Татса паман ыйтусем вара пурин те пӗрешкелтерех иккен. Район ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарнӑ май район пуҫлӑхӗ Ю. А. Иванов паян пурнӑҫ кӑларса тӑратнӑ проблемӑсем ҫинче те чарӑнчӗ.

–Паян шӑпах Шурча вӑрҫи пуҫланнӑранпа 165 ҫул ҫитрӗ. Ун чух хресченсем ҫӗршӗн алла сенӗк-кӗреҫе тытса пӑлхав пуҫланӑ. Паян вара патшалӑх халӑха ҫӗр парать, анчах ял ҫыннисем хаваспах илеҫҫӗ теме ҫук, – палӑртрӗ вӑл.

Ҫӗр пайӗсене харпӑрлӑха куҫарас тата ҫӗрпе ҫыхӑннӑ ыйтусем ытти районсенче те сиккипех пымаҫҫӗ иккен.

–Малтан ҫӗр ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен специалиста ҫур ставкӑпа хӑварчӗҫ. Ун чухнех вӗсем ӗҫ ҫине пӳрне витӗр пӑхма пуҫларӗҫ. Кайран пачах кӗскетрӗҫ ку штата, – хӑнасен ҫак сӑмахӗсенче ял тӑрӑхӗсенче тӑвас ӗҫе ӗҫлесе ҫитерме ҫукки халь ҫеҫ асӑннӑ специалист ҫуккипе ҫыхӑнни курӑнать.

Ку ыйтупа та Муркашсем алла усма шутламан. Ҫӗрпе ҫыхӑннӑ саккунсене палӑртнӑ вӑхӑтчен пурнӑҫлама, вӑхӑтлӑх хушма штатсем илме палӑртнӑ. Ҫапла туни БТИ ӗҫченӗсене те ӗҫе хӑвӑртлатма май парать. Мӗнех, хӑнасем ку ҫӗнӗ шухӑша та хӑлха ҫумӗпе ирттерсе ямарӗҫ.

Юрий Александрович ҫавӑн пекех килти хушма хуҫалӑхсенче туса илекенсене аш-пӑша вырнаҫтарас ӗҫре пулӑшу кирлине те палӑртрӗ. Мӗншӗн тесен унӑн хакӗ йӳнелсе кайрӗ. Чылай ыйтӑва татса парасси федераллӑ саккунсем йышӑннинчен килет. Ҫавӑнпа та пирӗн район пуҫлӑхӗ ку ыйтӑва РФ Патшалӑх Думин депутачӗсемпе пӗрле татса парсан вырӑнлине палӑртрӗ.

Ҫакна ниепле те палӑртмасӑр иртме ҫук. 131-мӗш Федераллӑ Саккун вӑя кӗнӗренпе вӑхӑт ҫулталӑк ҫурӑ иртрӗ. Ҫак кӗске хушӑрах ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем мӗнле кӑна йывӑрлӑхпа тӗл пулмарӗҫ пулӗ. Мӗншӗн кӑна яваплӑ мар пулӗ вӗсем. Ҫӳлтен ыйтакансем те сахал мар. Вӑл е ку ыйтӑва штрафсӑрах татса пама май пур ҫӗртех ытларах чухне самаях кӗсьене ҫӳхетме тивет. Унтан та ытларах – алӑ усӑнас патнех ҫитет тепӗр чух. Ҫак лару-тӑрӑва шута илсе В. И. Максимов ку ыйтӑва ҫӳллӗ шайранах кӑшт ҫемҫетмеллине палӑртрӗ. Пур службӑсем пӗр-пӗрне ӑнланса ӗҫленине мӗн ҫиттӗр. Тӗллевӗ пурин те пӗрех-ҫке – халӑх пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тимлесси.

–Кирек епле специалиста хатӗрлеме те чылай вӑхӑт кирлӗ. Аслӑ шкулсенче 5-6 ҫул вӗрентеҫҫӗ. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем ҫине вара харӑсах 100 проблема йӑтӑнса анчӗ. Вӗсене ҫӗнтерме вара вӗсене никам та пӗр кун та хатӗрлемен, – хӑйӗн шухӑшне мӗншӗн республика шайӗнче пӑхса тухма килӗшнине ӑнлантарчӗ ЧР муниципаллӑ йӗркелӳсен Канашӗн председателӗ В.И. Максимов.

Йывӑрлӑхсенчен вара ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем пӗр-пӗрин опытне тӗпе хурса та тухма тӑрӑшаҫҫӗ.

Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗнчен Л. Г. Ковалеваран хӑнасем урамсене электричествӑпа ҫутатас ыйтӑва мӗнле татса панине пӗлчӗҫ. Хорнуй ял тӑрӑхӗнче ав пушар машинисене тытса тӑрассине йӗркеллӗ татса панӑ. Унӑн пуҫлӑхӗ В.А. Любимова хаваспах каласа пачӗ кун пирки республикӑри ӗҫтешӗсене. Е тата Мӑн Сӗнтӗр тӑрӑхӗнчен мӗншӗн вӗренес мар культура объекчӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне хута яма. Интересленсех итлерӗҫ вӗсем Г.П. Мазиков ниме йӗркипе ялсенче клубсем туни ҫинчен каланине.

Муркаша пӑрӑнса кӗнӗ чухнех асӑрхарӗҫ хӑнасем Москакассинче тротуар тунине. Ҫынсен ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑхне пирӗн районта мала хунине ырларӗҫ вӗсем. Ку ҫеҫ те мар. Москакассисенчен татах та вӗренмелли пур иккен. Унӑн пуҫлӑхӗ М. М. Пушкин каланӑ тӑрӑх, малтан каҫхине ҫамрӑксем йӗркене пӑснӑ тӗслӗхсем самаях пулнӑ. Администрачипе Культура ҫурчӗ ҫине видеокурав аппаратурине вырнаҫтарни ашкӑнчӑксене “ҫаварлӑхлама” май панӑ. Кунта ял тӑрӑхӗн депутачӗсем те халӑхпа ҫыхӑнса ӗҫлессине вӑйлатнӑ. Малараx ку ӗҫе вырӑнти радио урлӑ ытларах тунӑ пулсан, халӗ вара депутатсем халӑхпа ӗҫе тӳрремӗн йӗркелеҫҫӗ.

Юнкӑ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ С.В. Ермаков ял хуҫалӑх производство кооперативне тӑвас опытне пайларӗ залра ларакансемпе. Хӑнасем уйрӑмах кредит кооперативӗ епле ӗҫленипе кӑсӑкланчӗҫ. Ҫӗнни, интересли тупрӗҫ вӗсем ку ыйтӑва татса парассинче те.

Семинарта ҫавӑн пекех республикӑри тӗрлӗ службӑсен представителӗсем тухса калаҫрӗҫ. Вӑл е ку ыйтӑва татса парассине уҫӑмлӑх кӗртрӗҫ. Калаҫӑва та семинара вӗҫленӗ шухӑшпах пӗтӗмлетес килет.

–Халӑх сире шанса суйланӑ. Ҫав вырӑнта тивӗҫлипех пулмалла сирӗн, – терӗ Василий Иванович.

– Чи кирли – малалла оптимистла пӑхни. Вӑл вара сирӗн пур. Умри ҫулӗ те курӑнса тӑрать. Район пуҫлӑхӗн Ю.А. Ивановӑн ҫак сӑмахӗсем ҫумне мӗнех хушса калайӑн? Ку ҫӑннпех ҫапла пулни савӑнтарать. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене малашнехи ӗҫре хавхалантарать. Ӗҫлесен чунтан, ыттисем вӗренмелӗх те ӗҫлеме пултаратпӑр иккен.

**Л. ПАВЛОВА.**






**Сӑн ӳкерчӗксенче: семинара хутшӑнакансем Ярославка ял тӑрӑхӗнче пулнӑ самантсем.**

**В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

Район прокуратуринче

## Налук законодательствине пӑхӑнмалла

Прокуратура ӗҫӗ-хӗлӗн пӗлтерӗшлӗ енӗсенчен пӗри налук законодательствине епле пурнӑҫланине тӗрӗслесе тӑрасси пулса тӑрать. Налук службисенчен ҫитнӗ информаци вара налуксемпе тӗрлӗ тӳлевсене тӳлессинчен пӑрӑнса ҫӳрекенсем пуррине ҫирӗплетет. Ҫавна май тӗрлӗ шайри бюджетсене укҫа-тенкӗ пухӑнса ҫитмест. Налук вара патшалӑх тытӑнса тӑмалли тӗп условисенчен пӗри пулса тӑрать.

Сӑмахран, Е. Андреев яч. хис., «Чемеево» хуҫалӑхсен, «Нежность» обществӑн вара налуксемпе тӗрлӗ тӳлевсем парса татассипе пысӑк парӑмсем пур. Хальхи вӑхӑтра ту тӗлӗшпе прокуратура енӗпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнас ыйту тӑрать.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**район прокурорӗн аслӑ пулӑшаканӗ.**

Асӑрханулла пулӑр

## Эрех тата сывлӑх

**Тӑтӑшах эрех сиенӗ ҫинчен калаҫатпӑр. Ҫавна хӑшӗ-пӗри ӑша хывать, тепри хӑлха ҫуммипе кӑна иртерсе ярать. Ҫавӑнпа та эпӗ паян эрех сиенӗ пирки тепӗр хут аса илтерме районти тӗп больницӑри нарколога Л.М. ИВАНОВАНА чӗнтӗм.**

Алкоголь организма питӗ пысӑк сиен кӳрет. Ӑна пула ҫын организмӗнче пысӑк улшӑнусем пулса иртеҫҫӗ. Темиҫе сыпкӑм ӗҫнӗ хыҫҫӑнах эпир хамӑра урӑхларах туйма пуҫлатпӑр. Ӗҫнӗ хыҫҫӑнах эрехӗн 20 проценчӗ хырӑмлӑхӑн лӑймака сийӗнчи юна пырса кӗрет. Тулли хырӑмлӑх ҫынна хӑвӑрт ӳсӗрӗлессинчен сыхлать, ҫапах та эрех хӑйӗн ӗҫнех тӑвать, юлашкинчен ҫын ӳсӗрлетех. Шапмански эрехри спирт юна хӑвӑртрах сӑрхӑнса кӗрет. Эрех организма лекнӗ-лекменех унтан тухма тытӑнать. Унӑн 5-10 проценчӗ ӳт-пӳ, сывлав ҫулӗсем витӗр тухать, ытти пӗверте ирӗлет. Организм 1 сехет хушшинче 7-10 грамм эрехрен ытла ирӗлтерейместт. Ҫывӑрас умӗн икӗ литр сӑра е пӗр литр хӗрлӗ эрех ӗҫнӗ ҫын тепӗр сехетрен кӑна урӑлса ҫитет.

80 килограмм таякан лайӑх сывлӑхлӑ ҫыннӑн пӗверӗ кунне 80 грамм таса эрехе ирӗлтерме пултарать, ҫапах та врачсем 40 грамм виҫерен ытла иртерме сӗнмеҫҫӗ. Хӗрарӑмӑн ку енӗпе ӗҫсем япӑхрах. Хӗрарӑм организмӗ “арҫын виҫин” ҫуррине кӑна, 20 грамм ирӗлтерме пултарать. Ку хӗрарӑмӑн хырӑмлӑхӗ эрехе лайӑх ирӗлтерейменнипе ҫыхӑннӑ.

4-5 черкке ӗҫнӗ хыҫҫӑн эсир вӑй-хӑватпа хӑюлӑх ӳснине туятӑр, хӑвӑра камитҫӑ евӗр тытатӑр, ҫапӑҫса илме те хатӗр. Ку тӗп нерв системин тытӑмӗ пӑсӑлнинчен килет. Ытлашши ӗҫме юратакан арҫынсем вара импотента тухма пултараҫҫӗ. В. Шекспир каланӑ евӗр: “Алкоголь ар туртӑмне вӑйлатать, анчах та ӗҫе пурнӑҫлама чӑрмантарать”.

Эрех нумай ӗҫни пӳрене хӑвӑртрах ӗҫлеме хистет, организм шывсӑрланать, ҫӑвар типет. Нерв тытӑмне йывӑр тивнипе пуҫ ыратма тытӑнать.

Эрехре мӗн чухлӗ хими ытларах – пуҫ ҫавӑн чухлӗ хытӑрах ыратать. Тӗслӗхрен, шурӑ тӗслӗ ҫырла эрехӗнче тирамин ятлӑ япала пур.

Алкоголь апат ирӗлтерекен тытӑмӑн ӗҫне пӑсать, ҫынна хӑстарать, пыр хӗртет. Эрехе виҫесӗр ӗҫни ӑс-хакӑл, ар пултарулӑхне чакарать, пӗверӗн ракне, цирроз, миокард инфарктне пуҫарать. Эрех тӑтӑшах нумай ӗҫни сывлӑха питӗ хытӑ хавшатать. Уйрӑмах суррогатлӑ, тӗрлӗрен наркӑмӑшлӑ эрех сывлӑха палӑрмаллах сиен кӳрет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаҫнӑ.**

Ҫемье кунне халалласа

## Пӗрле курнӑҫнине мӗн ҫиттӗр

Ҫу уйӑхӗн 15-мӗшӗнче Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунне халалласа Муркашри куҫ курманнисен вырӑнти организацийӗ ҫемьесем хушшинче “Алла аллӑн, ыр сунса...” темӑпа конкурс ирттерчӗ.

Ҫемье. Тӗрлӗрен пулаҫҫӗ ҫемьесем. Пӗр тӗвве, пӗр ҫемьене пӗрлешнӗ килйышра тепӗр чухне тӗрлӗрен кӗтмен хуйхӑ-суйхӑ та килсе кӗрет. Куҫ курман инвалидсем пурӑнакан ҫемьесем пирӗн районта сахал мар. Ҫак ӑмӑртӑва 6-7 ҫемьенех чӗннӗччӗ, тӗрлӗ сӑлтава пула пурте килсе ҫитеймерӗҫ. Хунтӑкасси ялӗнче пурӑнакан Пагеевсем виҫҫӗн те килсе савӑнтарчӗҫ, Калайкассинчи Раиса Ивановнапа Римма Дмитриевна Беляевасем (кинӗпе хунямӑшӗ) тепӗр ҫемье команди пулчӗҫ, Е.А. Пушкина (Москакасси), Г.Н. Кириллова (Муркаш), Г.В. Чернова (Ҫеҫмертен), Р.В. Мерлова (Чураккассинчен), Т.И. Петрова (Лантӑшран), Н.Т. Селюшкин (Юнкӑ ялӗнчен) ҫемье командисем йӗркелесе ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ.

Чи малтан пухӑннӑ куҫ курман инвалидсене Муркашри диагностикӑпа консультаци центрӗн педагог-психологӗ Л.А. Верховцева “Ҫемье, ҫемьери хутшӑнусем, пурнӑҫри тӗрлӗ йывӑрлӑхсем ҫемьере...” тема таврашӑ уҫӑ калаҫу-тренинг ирттерчӗ. Пурне те килӗшрӗ ҫак уҫӑ калаҫу, чуна уҫса каласса киленме май туса пачӗ пире Людмила Александровна. Тавтапуҫ ӑна пирӗн пата хӑнана килнӗшӗн, пурнӑҫри йывӑр самантсене тивӗҫлӗн, ҫӑмӑллӑн чӑтса ирттерме вӗрентнӗшӗн.

Ӑмӑртӑва ертсе пыма, илемлетсе йӗркелеме районти тӗп библиотекӑн ӗҫченӗсем Т.В. Ивановапа Л.Н. Сорокина пулӑшрӗҫ. Ҫемье ыйтӑвӗсем тавра викторина иртрӗ, пӗр-пӗрне пулӑшсан, ӑнлансан ҫеҫ ҫемьере тем тума та ҫӑмӑлрах.

Ҫапла, сӗм суккӑр е япӑх куракан инвалидсене пурӑнма ҫӑмӑл мар. Ҫавна ӑнланма тепӗр чухне пӗр самантрах май тупӑнчӗ. Куҫсене тутӑрпа ҫыхрӑмӑр та пӑтӑ пӗҫерме 5-6 тӗрлӗ кӗрпе хушшинче кирлӗ кӗрпе суйлаттартӑмӑр ӑмӑртакансене. Пуринчен ӑсти 1-мӗш ушкӑн инваличӗ В.Н. Пагеев пулчӗ – вӑл кӗрпене ӑлапа тытса пӑхсах пурне те йӑнӑшмасӑр тупса палӑртрӗ.

Ӑмӑртура ҫӗнтерӳҫӗсем палӑраҫҫех ҫав – Вячеслав Николаевичпа Ирина Владимировна Пагеевсем чи маттуррисем пулчӗҫ, Беляевасем вара пӗр-пӗринпе килӗштерсе пур ӑмӑртура та тӗрӗс хуравсем пачӗҫ.

Культура ӗҫченӗсем конкурса хутшӑннисене юрӑсемпе савӑнтарчӗҫ, ҫавра сӗтел хушшинче анне ҫинчен, юратупа тӑванлӑх ҫинчен ҫепӗҫ юрӑсем шӑрантарчӗҫ.

Вӗри чей ӗҫсе, килтен илсе килнӗ кучченеҫсене активсе киленчӗҫ пухӑва килнисем.

– Ҫакнашкал кӑмӑллӑ калаҫусем, пухусем, тӗрлӗ ӑмӑрту-викторинӑсем часчасах ирттеҫҫӗ пирӗн вырӑнти организацинче, – каласа парать малалла А.Д. Михайлова ертӳҫӗ. 60 ҫул каяллах йӗркеленсе кайнӑ куҫ курманнисен Муркашри вырӑнти организацийӗ. Элӗкпе Муркаш районӗсенче пурӑнакан куҫ курман инвалидсем пӗрле туслӑ пурӑнаҫҫӗ, ҫывӑх вӑхӑтрах юбилее халалласа анлӑ та хаваслӑ уява пухӑнма хатӗрленеҫҫӗ.

**Е. НИКИТИНА,**
**куҫ курманнисен обществин вырӑнти организацийӗн секретарӗ.**

Тӗпелте чух

### Купӑстапа ҫӑмарта

0,5 кг купӑста, 2 ҫӑмарта, 1 шӑл ыхра, 1 хӗрлӗ пӑрӑҫ, 0,25 стакан тип ҫу, тутӑ ламалӑх тӑвар, авӑртнӑ хура пӑрӑҫ кирлӗ.

Ҫатмана 1 апат кашӑкӗ тип ҫу ярса хӗртмелле, вӗтетнӗ хӗрлӗ пӑрӑҫпа ыхрана кӑштах ӑшаламалла. Вӗтӗ туранӑ купӑста хушмалла, тӑвар, авӑртнӑ пӑрӑҫ сапмалла, юлнӑ тип ҫӑва ярса пӑшӑхламалла. Кӑпӑклантарнӑ ҫӑмарта хушса лайӑх пӑтратмалла.